УТВЕРЖДАЮ
Проректор БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии
……………С.В. Петрова
«30»…………………2019 г.

**Государственная итоговая аттестация по образовательным программам среднего общего образования в форме единого республиканского экзамена**

**Демонстрационный вариант**
контрольных измерительных материалов
единого республиканского экзамена 2020 года
по ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

Подготовлен кафедрой этнокультурного образования
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии



# ЧӐВАШ ЧӖЛХИПЕ
## 2020 ҫулта тытмалли республикӑн пӗрлехи экзаменӗн тӗслӗх варианчӗ

### Тӗслӗх варианта ӑнлантарни

Тӗслӗх варианта 11-мӗш класс пӗтерекенсене пулас экзамен тытӑмӗпе тата йӗркипе паллаштарма хатӗрленӗ: экзамен ӗҫӗн тытӑмне ӑнлантарнӑ, заданисен формипе шутне кӑтартнӑ, экзамен ӗҫӗсене хакламалли критерисене палӑртнӑ. Пӗлӳ содержанийӗн элеменчӗсене ҫавӑн пекех кодификаторта кӑтартнӑ.

### Вӗренекен валли хатӗрленӗ инструкци

Тӗрӗслевпе хаклав материалӗ 27 ӗҫе пӗрлештерекен 2 пайран тӑрать. Пӗрремӗш пайра – 26 ӗҫ, иккӗмӗш пайра – 1 ӗҫ.

Экзамен ӗҫӗсене тума 3,5 сехет (210 минут) уйӑрнӑ.

1-26-мӗш ӗҫсен хуравӗсене цифрӑпа (числопа), сӑмахпа (сӑмахсемпе) е цифрӑсен (числосен) йӗркипе кӑтартмалла. Хуравсене текстра ятарласа палӑртса хӑварнӑ вырӑна ҫырмалла, кайран хуравсен 1-мӗш бланкӗ ҫине куҫармалла.

КИМ Хуравӗ: 15 — Бланк: 1 5

Хуравӗ:

| А | Ӑ | Б | В | Г |
|---|---|---|---|---|
| 3 | 2 | 6 | 1 | 4 |

Бланк: 3 2 6 1 4

Хуравӗ: илем — Бланк: и л е м

**2-мӗш пайра (27-мӗш ӗҫре)** вуланӑ текст тӑрӑх сочинени ҫыралла. Сочинени текстне хуравсен 2-мӗш бланкӗ ҫине ҫырмалла.

Хуравсене хура чернилпа ҫырмалла.

Ӗҫсене тунӑ чух хуравӑша (черновика) ҫырма юрать. **Ӗҫсене хакланӑ чух хуравӑшра тата тӗрӗслевпе-хаклав материалӗсен текстӗнче ҫырнине шута илмеҫҫӗ.**

Ӗҫсене тунӑшӑн илнӗ балсене пӗрле хушаҫҫӗ. Май килнӗ таран ытларах ӗҫ туса чи нумай балл пухма тӑрӑшӑр.

Ӗҫсене туса пӗтернӗ хыҫҫӑн кашни ӗҫӗн хуравӗ хуравсен 1-2-мӗш бланкӗсенче тӗрӗс номерпе тӑнипе тӑманнине пӑхса тухӑр.

***Ӑнӑҫу сунатпӑр сире!***

**1** **Текстăн тĕп информацине тĕрĕс палăртакан предложенисен номерĕсене çырăр.**

*1) Чăваш поэзийĕн классикĕ Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 120 çул çитрĕ.*

*2) Шкул ачисем палăк умĕнче Çеçпĕл Мишшин сăввисене вуланă.*

*3) Çеçпĕл ялĕн культура çуртĕнче студентсем поэтăмăрăн сăввисене вуланă.*

*4) Чăваш халăх поэчĕ Çеçпĕл Мишши 120 çул каялла çуралнă.*

*5) Чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче республикăри культурăпа вĕренӳ учрежденийĕсенче чылай мероприяти иртрĕ.*

**Хуравĕ:** ____________________

**2** **4-мĕш предложенире нумай пăнчă вырăнне шухăш тăрăх юрăхлă сăпат местоименине çырăр.**

**Хуравĕ:** ____________________

**3** ***Вула* сăмахăн пĕлтерĕшĕсене çырса панă словарь статйине вулăр. Текстăн 4-мĕш предложенийĕнче *вула* сăмахăн хăш пĕлтерĕшĕпе усă курнă? Çав пĕлтерĕшпе тӳр килекен номере çырăр.**

*Вула*

1. Пĕр-пĕр текста ăса хыв, çырнине пуçа ил. *Кĕнеке вула.*

2. Çырнине сасăпа янаратни е ăсра тăнлани. *П. Хуманкайăн «Таня» поэмин сыпăкĕсене Андрей илемлĕн вуласа пачĕ.*

3. Техника хатĕрĕн «ăсне» хыв, хут е экран çине кăларса пар. *Компьютер программисем халĕ чăвашла текстсене те вулама пултараççĕ.*

**Хуравĕ:** ____________________

**4** **Пусăм ӳкекен усă сасса кăтартакан сас паллине йăнăш кăтартнă сăмаха çырăр**

*КăмакА, кăмĂл, кăрантАш, кăлАрăм.*

**Хуравĕ:** ____________________

**5** **Çырса панă предложенисенчен пĕринче паллă тунă сăмахпа йăнăш усă курнă. Лексика йăнăшне тӳрлетĕр, çав сăмахăн паронимне çырăр.**

*Паян питĕ ĂНĂÇЛĂ кун пулчĕ.*

*Романăн пĕр СЫППИНЕ вуласа тухрăм.*

*Çемье манăн пурнăçра питĕ пысăк вырăн йышăннине эпĕ паян питĕ лайăх ĂНЛАНСА илтĕм.*

**Хуравĕ:** ____________________

**6** **Предложенире хăш сăмахĕ ытлашши? Çав сăмаха çырăр.**

*Туратран татăлакан юлашки çулçăсем тĕттĕм сывлăшра вĕлтĕртетсе-явăнса исленчĕк çĕр çине тăкăнаççĕ.*

**Хуравĕ:** ____________________





**7** **Хăш сăмахăн формине йăнăш йĕркеленĕ? Йăнăша тӳрлетсе çав сăмаха тĕрĕс çырса парăр.**

*нумай АЧА*

*КĔНЕКЕНЕ усă кур*

*ЙĔЛТĔРПЕ ярăн*

*манăн ЮЛТАШĂМ*

*пирĕн ЯЛĂМĂР*

**Хуравĕ:** ____________________

**8** **Грамматика йăнăшĕсемпе вĕсем тĕл пулакан предложенисене çыхăнтарăр.**

| ГРАММАТИКА ЙĂНĂШĔСЕМ | ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ |
|---|---|
| (А) япала ячĕн падеж формипе йăнăш усă курни | *(1) Анне тата эпĕ вăрмана кайрăм.* |
| (Ă) япала ячĕн нумайлă хисеп формипе йăнăш усă курни | *2) Шкул умне чылай ачасем пуçтарăннă.* |
| (Б) камăнлăх формипе йăнăш усă курни | *(3) Çумăр çунă пирки хĕвел пăхса ячĕ.* |
| (В) подлежащипе сказуемăй хушшинчи çыхăнăва тĕрĕс йĕркелеменни | *(4)Манăн аппамăр Хусанта вĕренет.* |
| (Г) пăхăнуллă хутлă предложение тĕрĕс йĕркелеменни | *5) Сăнара уçса парас тесе çыравçă тĕрлĕ эпитета усă курать.* |

**Сас паллисемпе тӳр килекен тĕрĕс хуравсен номерне таблицăна çырăр.**

**Хуравĕ:**

| А | Ă | Б | В | Г |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |

**9** **Хуравăн хăш варианчĕсенчи сăмахсене икĕ *ч* юнашар çырмалла?**

*1) çыр..ăр, лар..ăр, тар..ăр;*

*2) тух..ăр, сик..ĕр, хуш..ăр;*

*3) вула..ăр, шутла..ăр, юрла..ăр;*

*4) вĕç..ĕр, ăшăт..ăр, пух..чăр;*

*5) кай..ăр, пĕлтер..ĕр, ăнлантар..ăр.*

**Хуравĕ:** ____________________

**10** **Кашни сăмахĕнчех çемçелĕх палли сиксе юлнă хурав варианчĕн номерĕсене çырăр.**

*1) супăн.., выл..ăх, ахаль;*

*2) хĕвел.., кил.., кĕмĕл..;*

*3) мехел.., ĕçлет.., пĕлет..;*

*4) кĕс..е, тух..я, мăр..е;*

*5) хал..ех, .ахал..ех, пĕлтĕр..ех.*

**Хуравĕ:** ____________________

**11** **Нумай пăнчă вырăнне вăрăм хупă сасса палăртакан сас паллисене хуравăн хăш вариантĕсенче çырмалла?**
1) *тĕ..ĕм вăрман, вăр..ăн çын, па..ăр çын;*
2) *тĕ..ĕм тух, аяккалла вăр..ăн, вăй па..ăр;*
3) *ви..ĕ ача, пи..ĕк хут тӳрлет, и..ĕ тус;*
4) *ви...ĕ кала, пĕ..е кас, çи..ĕ виç;*
5) *ă..ăн пăх, йывăç тă…и, си..ĕн калаç.*

**Хуравĕ:** ________________________

**12** **Нумай пăнчă вырăнне икĕ** *л* **юнашар хуравăн хăш вариантĕсенче çырмалла?**
1) *çăка..ăх, юман..ăх, çĕмĕрт..ĕх;*
2) *тăрăшу..ă, хăю..ă, пăхăну..ă;*
3) *илем..ĕ, сăпай..ă, типтер..ĕ;*
4) *сыпăну..ă, çыру..ă, тĕрĕ..ĕ;*
5) *илем..ĕх, сăпай..ăх, хăю..ăх.*

**Хуравĕ:** ________________________

**13** **Нумай пăнчă вырăнне** ***ы*** **сас палли хуравăн хăш вариантĕсенче çырмалла?**
1) *ч..р, ч..пер, ч..кĕ;*
2) *ç..п, ç..рĕп, ç..мĕç;*
3) *ç..рма, ç..рла, ç..ру;*
4) *ç..лĕм, ç..л, ç..вĕт;*
5) *ç..хă, ç..ран, ç..рă.*

**Хуравĕ:** ________________________

**14** **Палăртнă сăмахсене пысăк сас паллинчен пуçласа хуравăн хăш вариантĕсенче çырмалла?**
1) *«КĂМАША» лавкка, «ЯЛАВ» журнал, «НАРСПИ» поэма ;*
2) *«Хурçă ШАНЧĂК» сăвă, «Симĕс ЫЛТĂН» повесть, «Хĕн-хур АЙĔНЧЕ» поэма;*
3) *Тени КӲЛЛИ, Анатри УРАМ, Кашкăр ÇЫРМИ;*
4) *УНКĂ шывĕ, ÇАВАЛ шывĕ, СУРĂМ шывĕ;*
5) *В.З. Иванов-ПАЙМЕН, В.И. Краснов-АСЛИ, И.С. Максимов-КОШКИНСКИЙ.*

**Хуравĕ:** ________________________

**15** **Дефиспа хуравăн хăш вариантĕсенчи сăмахсене çырмалла?**
1) *пахча çимĕç, юхан шыв, йĕп кусĕ;*
2) *тĕттĕм кăвак, йăмăх хĕрлĕ, çутă сарă;*
3) *çăкăр тăвар, уй хир, сĕтел пукан;*
4) *ир кас, кунĕн çĕрĕн, тĕрĕс тĕкел;*
5) *мулкач хăлхи, йыт пырши, кăвакарчăн куçĕ.*

**Хуравĕ:** ________________________





**16** **Запятой хуравăн хăш вариантĕсенчи предложенисенче лартмалла?**
1) *Ниçта пĕр хут татки е çӳпĕ йăвланса выртмасть.*
2) *Эпĕ питĕ васкарăм çапах ĕлкĕреймерĕм.*
3) *Çумăр çума чарăнчĕ те хĕвел пăхса ячĕ.*
4) *Аппа шкул пĕтерчĕ те университета вĕренме кĕчĕ.*
5) *Чăваш чĕлхи илемлĕ те çепĕç.*

**Хуравĕ:** ________________________

**17** **Запятой лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.**
*Кирек епле (1) аякка кайсан та Тăван çĕр-шывăн (2) ырă сывлăшне (3) çăкăр-тăварне (4) атте-анне çĕрне (5) чĕлхине (6) йăлине (7) юррине (8) манас марччĕ.*

**Хуравĕ:** ________________________

**18** **Запятой лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.**
*Амăшĕ (1) упăшкипе (2) аслă ывăлĕ иртнĕ вăрçăра (3) вилнĕренпе пĕрмай (4)пусăрăнчăк кăмăлпа çӳрекенскер (5) пушшех ватăлнă.*

**Хуравĕ:** ________________________

**19** **Запятой лартмалли вырăна (-сене) кăтартакан цифрăсене çырăр.**
*Чăнах та (1) адрес улшăнасса (2) кĕтсе пурăннă пирки (3) юлашки вăхăтра (4) Валентин килне те (5) çыру ямсасăр тăчĕ.*

**Хуравĕ:** ________________________

**20** **Запятой лартмалли вырăна (-сене) кăтартакан цифрăсене çырăр.**
*Тахçан авал (1) çĕр çинче этемсем пулман (2) вĕсем вырăнне (3) пысăк та (4) вăйлă улăпсем пурăннă.*

**Хуравĕ:** ________________________

**21** **Пĕр пункутаци правилипех тире лартнă предложенисене кăтартакан цифрăсене çырăр.**
(1)Эпĕ лартăм çеç – кимĕ тапранса та кайрĕ. (2)Çырма вăл – çĕр суранĕ. (3)Ирхине Ухтиван куçне уçма ĕлкĕрнĕччĕ кăна – картишне урамран ашшĕ васкаса чупса кĕчĕ. (4)Шанатăп эпĕ халăхăм – чăвашăм – парка телей пĕрчи тупассине. (5)«Кам килчĕ?» – ыйтрĕ Салампи Пĕчĕк Нинăран.

**Хуравĕ:** ________________________

**Текста вуласа тухăр та 22-27-мĕш ĕçсене тăвăр.**

(1)Пĕр ват чăвашăн тăхăр ывăл пулнă. (2)Туслă пурăнма пĕлмен вĕсем: вактăвекшĕн хирĕçнĕ, тавлашнă, харкашнă. (3) Ку вара ашшĕне питĕ пăшăрхантарнă.

(4)Пĕррехинче вăл ывăлĕсене чĕннĕ те ыйту панă:

– Ывăлăмсем, ылтăнăмсем, сирĕнтен хăшĕ тĕрĕсне калама пултарĕ: мĕн-ши вăй?

(5)Тăхăр ывăлĕ тăхăр тĕслĕ каланă. (6)Вăй çивĕч сăмах, укçа тесе калакансем пулнă, илем вăйне, кăмăл вăйне, ăс-тăн вăйне мухтаканнисем те тупăннă.

(7)Вара вахă чăваш ывăлĕсене пĕрле пуçтарса акă мĕн хушнă:

– Анкарти хыçне тухăр та хăвăрăн хурамăрсенчен пĕрер хулă хуçса кĕрĕр.

(8)Çак чăваш ывăл çуралмассерен хурама лартса хăварнă иккен. (9)Халь хурамасем ÿссе çитĕннĕ.

(10)– Хăвăр хурамăрсенчен кăна хуçăр, – хытарса каланă ашшĕ.

(11)Ашшĕне пĕрер хулă илсе килсе тыттарнă ывăлĕсем.

(12)– Хулăсене пĕрле пуçтарса кантрапа йăлмакласа çыхăр, – хушнă кил хуçи.

(13)Ывăлĕсем тăхăр хулла тăрăшсах пăчăртаса çыхса хунă.

(14)– Пĕрле çыхнă хулăсене халь варринчен хуçма хăшĕ вăй çитерĕ?

(15)Малтанах асли тухнă. (16)Тем вăхăт аппаланса та хуçайман, аллине, чĕр куççине ыраттарни çеç пулнă. (17)Ытти ывăлĕсем те тарличченех тĕрмешнĕ – пĕр хулли те пулин нăтăрт е шăтăрт тăваясчĕ, пурте тĕрĕс-тĕкелех.

(18)Кĕçĕнни аппаланса та тăман, ашшĕ еннелле кăмăллăн пăхнă. (19)Ун шухăшне чи малтан ăша илнине систерме хăяйман хăй.

(20)Ватă чăваш йăл кулса хушнă ывăлĕсене:

– Халь, эппин, салтса сапалăр çыхнă хуллăрсене.

(21)– Салтас, – терĕç кусем, анчах ĕçне тăваканни кĕçĕннисех пулчĕ. (22)Çавăнтах салтса сапаларĕ çыхнă шăпăра. (23)Ашшĕ хăйĕн вăйсăр пÿрнисемпе тăхăр хуллине те пĕрерĕн-пĕрерĕн хуçа-хуçа урайнелле ывăтрĕ. (24)Унтан ывăлĕсене тишкерÿллĕн куçĕсенчен пăхрĕ:

– Вăй мĕн эппин? (25)Хăшĕ сирĕнтен тĕрĕссине калама пултарĕ?

(26)Кĕçĕн ывăлĕ пиччĕшĕсен еннелле пăхрĕ. (27)Лешсем шарламарĕç. (28)Ашшĕ ирĕк парсан:

– Вăй – пĕрлешÿ, атте, – терĕ.

(29)Аслисен шăллĕ каланă шухăшпа килĕшме тиврĕ. (30)Çавăнтан вĕсем пурте пĕр çăвартан пурăнма тытăнчĕç.

(31)Чăваш ачисен ĕмĕтне тултараканни çак пехил пулнă. (32)Кĕçĕннишĕн те. (33)Аслисемшĕн те. *(Г. Волков.)*

***Геннадий Волков*** *(1927 – 2010) – чăвашсен паллă этнопедагогĕ.*

22 **Текст содержанийĕпе тÿр килекен предложенисен номерĕсене çырăр.**

1) Пĕр ват чăвашăн тăхăр ывăл пулнă.
2) Ашшĕ кашни ывăл çуралмассерен юман лартнă.
3) Ват çыннăн ывăлĕсем вăрмана кайса хурама хуллисене хуçса килнĕ.
4) Хурама хуллисене пĕрерĕн-пĕрерĕн аслă ывăлĕ хуçать.
5) Тăхăр хулла пĕррерĕн-пĕрерĕн хуçма çăмăллинне курса ĕненсен ват çыннăн ачисем туслă пурăнма пуçланă.

**Хуравĕ:** ______________________

23 **Хуравăн хăш вариантĕнче калани тĕрĕс? Тĕрĕс хурав номерĕсене çырăр.**

1) 1-мĕш предложение ăслав кĕввипе çырнă.
2) 7-мĕш предложение сăнлав кĕввипе çырнă.
3) 28-мĕш предложенире ăслав элеменчĕсем пур.
4) 8-мĕш предложени 7-мĕш предложенире каланине уçса парать.
5) 21-23-мĕш предложенисене калав кĕввипе çырнă.

**Хуравĕ:** ______________________

24 **1-4-мĕш предложенисенчен «ал-ура, ÿт-пÿ пултарулăхĕ, хăват» пĕлтерĕшлĕ сăмаха çырса илĕр.**

**Хуравĕ:** ______________________

25 **26-29-мĕш предложенисенчен хăшне умĕнчи предложенипе кăтарту местоименийĕ çыхăнтарать? Предложени номерне çырăр.**

**Хуравĕ:** ______________________

**22-25-мĕш ĕçсене туса тишкернĕ текст рецензийĕн сыпăкне вуласа тухăр. Ку сыпăкра текстăн чĕлхе уйрăмлăхĕсене тишкернĕ.**
**Рецензи сыпăкĕнче хăш-пĕр терминсене сиктерсе хăварнă. А, Ă, Б, В, Г сас паллисем хыççăн скобкăра илсе панă тĕслĕхсене юрăхлă терминсен номерĕсене çырăр.**
**Хуравсен 1-мĕш бланкĕнче 26-мĕш ĕç тĕлĕнче пĕрремĕш клеткăран пуçласа цифрăсен номерĕсене текстри йĕркепе килĕшÿллĕн запятойсемсĕр çырăр.**

26 **Г. Волков хăйĕн текстĕнче (А) __________ (4-мĕш предложенире „ылтăнăмăсем“, 6-мĕш предложенире „илем вăйне, кăмăл вăйне, ăстăн вăйне“), (Ă) _________ (6-мĕш предложенире „çивĕч сăмахра“) усă курнă. Шухăша тĕрĕс те сăнарлă кăтартма (Б) ____________(30-мĕш предложенире „пĕр çăвартан пурăн“, 19-мĕш предложенире „ăша ил“) фразеологизмсем пулăшаççĕ. (В) ____________ (17-мĕш предложенире „нăтăрт“, „шăтăрт“, 20-мĕш предложенире „йăл“) текста чĕрĕлĕх кĕртеççĕ.**

Терминсен списокĕ:
1) эпитет;
2) метафора;
3) фразеологизм;
4) кÿртĕм сăмахсем;
5) синекдоха;
6) танлаштару;
7) кăшкăрулла предложени;
8) литота;
9) евĕрлев сăмахĕсем.

**Хуравĕ:** ______________________

(!) **1-26-мĕш ĕçсен хуравĕсене хуравсен 1-мĕш бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут тĕрĕслĕр.**

## 2-мĕш пай

**Ку ĕçе хуравсен 2-мĕш бланкĕнче çырăр.**

27 Вуланă текст тăрăх сочинени çырăр.

Текст авторĕ лартнă проблемăна çырса тата уçса парăр. Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентрĕр (ытлашши цитатăланинчен асăрханăр). Кашни тĕслĕхех ăнлантарса парăр, вĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртăр.

Текст авторĕн позицине çырса парăр. Текстра хускатнă проблема çине автор мĕнле пăхнине йышăнса е йышăнмасăр хăвăр шухăшăра хÿтĕлĕр.

Сочинени калăпăшĕ 150 сăмахран кая пулмалла мар.

Вуланă текст çине таянмасăр çырнă сочинение хакламаççĕ. Енчен те эсир вуланă текста ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.





## Чăваш чĕлхипе çырнă экзамен ĕçĕсене хакласси

### 1-мĕш пай

1-7, 9-15, 17-25 ĕçсене тĕрĕс тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет. Хурав тĕрĕс пулмасан е вăл пачах пулмасан – 0 балл лартаççĕ.

16-мĕш ĕçе тунăшăн 0 балран пуçласа 2 балл таран лартма пултараççĕ. Тĕрĕс хураври пĕтĕм цифра пулсан тата урăх цифрăсем пĕрре те пулмасан – ĕçе 2 балл лартса хаклаççĕ. Тĕрĕс хураври пĕр цифра пулмасан е ун вырăнне урăх цифра пулсан – ĕçе 1 балл лартса хаклаççĕ.

8-мĕш ĕçе тунăшăн ача 0 балран пуçласа 5 балл таран илме пултарать: кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл лартаççĕ.

26-мĕш ĕçе тунăшăн 0 балран пуçласа 4 балл таран илме пулать. Тĕрĕс хураври пĕтĕм цифра пулсан тата урăх цифрăсем пĕрре те пулмасан – 4 балл лартаççĕ. Тĕрĕс хураври кашни цифрăшăн ача 1 илет.

| Ĕç номерĕ | Тĕрĕс хурав |
|---|---|
| 1 | 15<e>51 |
| 2 | вĕсем |
| 3 | 2 |
| 4 | кăмăл |
| 5 | сыпăкне |
| 6 | тĕттĕм |
| 7 | кĕнекепе |
| 8 | 52413 |
| 9 | 135<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 10 | 14<e>41 |
| 11 | 145<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 12 | 24<e>42 |
| 13 | 35<e>53 |
| 14 | 145<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 15 | 34<e>43 |
| 16 | 23<e>32 |
| 17 | 34567<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 18 | 15<e>51 |
| 19 | 1 |
| 20 | 2 |
| 21 | 13<e>31 |
| 22 | 15<e>51 |
| 23 | 345<e>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки |
| 24 | вăй |
| 25 | 27 |
| 26 | 2139 |

## 2-мĕш пай

**Текст çинчен информаци çырса пани***

| Проблемăсем | Автор позицийĕ |
|---|---|
| 1. *Пехил* пĕлтерĕшне палăртас проблема (Çын шăпинче ашшĕ-амăшĕн пехилĕ мĕнле вырăн йышăнать?) | Ашшĕ панă пехилпе ачисем хăйсен ĕмĕтне тултарнă, вĕсем пĕр çăвартан пурăнма тытăннă. |
| 2. «Вăй» ăнлава уçса парас проблема (Мĕн вăл вăй? Вăй мĕнре палăрать?) | Вăй – пĕрлешӳ. Вăл тăвансем хушшинчи туслăхра палăрать. |
| 3. Çын пурнăçĕнче пĕрлешӳ, туслăх мĕнле вырăн йышăннине палăртас проблема (Пĕрлешӳ, туслăх çын пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăнать? | Çын пĕрлешӳ пулсан кăна вăйлă. Хулăсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хуçма питĕ çăмăл. Çыхăра вара хуçма çук. Тăванлăха та çавăн пекех аркатаймастăн. |

*** Проблемăсене ача çырса панă лексика таблицăра кăтартнинчен уйрăлса тăма пултарать. Проблемăна вуланă текстран цитатăлама та юрать, текстри предложени номерне кăтартса çырма та пулать.**





## Туллин хуравламалли ĕçе хакламалли критерисем

| № | 27-мĕш ĕçĕн хуравне хакламалли критерисем | Балсем |
|---|---|---|
| I | *Сочинени содержанийĕ* | |
| К1 | **Вуланă текстра хусактнă проблемăсене çырса пани** | |
| | Вуланă текстра хускатнă проблемăсенчен пĕрне тĕрĕс çырса панă. Проблемăна ăнланнипе тата ăна çырса панипе çыхăннă факт йăнăшĕсем çук. | 1 |
| | Вуланă текстра хускатнă проблемăсенчен пĕрне те çырса паман. ***Вуланă текстра хускатнă проблемăсенчен пĕрне те çырса паман е йăнăш çырса панă пулсан ĕçе К1-К4 критерисемпе 0 балл лартса хаклаççĕ.** | 0 |
| К2 | **Вуланă текстра хусактнă проблемăна ăнлантарса пани** | |
| | Хăй çырса панă проблемăна ача вуланă текст çине таянса ăнлантарса панă.<br>Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕхрен** кая мар илсе панă.<br>Усă курнă 2 тĕслĕхе ăнлантарса панă, вĕсем хушшинчи çыхăнăва уçса панă.<br>Проблемăна ăнланнипе тата ăна çырса панипе çыхăннă факт йăнăшĕсем ăнлантарса панинче çук. | 5 |
| | Хăй çырса панă проблемăна ача вуланă текст çине таянса ăнлантарса панă.<br>Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕхрен** кая мар илсе панă.<br>Усă курнă 2 тĕслĕхе ăнлантарса панă, **анчах** вĕсем хушшинчи çыхăнăва уçса паман,<br>**е**<br>тĕслĕхсем хушшинчи çыхăнăва уçса панă, **анчах** пĕр тĕслĕхе çеç ăнлантарса панă.<br>Проблемăна ăнланнипе тата ăна çырса панипе çыхăннă факт йăнăшĕсем ăнлантарса панинче çук. | 4 |
| | Хăй çырса панă проблемăна ача вуланă текст çине таянса ăнлантарса панă.<br>Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕхрен** кая мар илсе панă,<br>**анчах** усă курнă 1 тĕслĕхе çеç ăнлантарса панă, тĕслĕхсем хушшинчи çыхăнăва уçса паман,<br>**е**<br>вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **1 тĕслĕх** илнĕ тата ăна ăнлантарса панă,<br>**е**<br>вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕх** илнĕ, анчах вĕсене ăнлантарса паман. Тĕслĕхсем хушшинчи çыхăнăва уçса панă. | 3 |

| | | |
|---|---|---|
| | Проблемăна ăнланнипе тата ăна çырса панипе çыхăннă факт йăнăшĕсем ăнлантарса панинче çук. | |
| | Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕх** илсе панă, анчах вĕсене ăнлантарса паман. Тĕслĕхсем хушшинчи çыхăнăва уçса паман. | 2 |
| | Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **1 тĕслĕх** илнĕ, **анчах** ăна ăнлантарса паман. | 1 |
| | Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **тĕслĕхсем** илсе паман,<br>**е**<br>проблемăна текст çине таянса ăнлантарса паман,<br>**е**<br>ăнлантарса панинче вуланă текстпа ăнланнипе çыхăннă факт йăнăшĕ(сем) пур,<br>**е**<br>çырса паман проблемăна ăнлантарса панă,<br>**е**<br>ăнлантарса парас вырăнне текстăн содержанине çырса панă,<br>**е**<br>ăнлантарса парас вырăнне текстăн пысăк пайне цитатăласа панă. | 0 |
| **К3** | **Текст авторĕн позицийĕ палăрни** | |
| | Ăнлантарса панă проблема пирки текст авторĕ мĕнле шухăшланине ача тĕрĕс кăтартса панă.<br>Текст авторĕн позицине ăнланнипе çыхăннă факт йăнăшĕсем çук. | 1 |
| | Ăнлантарса панă проблема пирки текст авторĕ мĕнле шухăшланине ача тĕрĕс кăтартса паман,<br>**е**<br>текст авторĕн шухăшлавне ача çырса паман. | 0 |
| **К4** | **Шкул ачин позицийĕ палăрни** | |
| | Текст авторĕн позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать. | 1 |
| | Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине кăтартман,<br>**е**<br>шкул ачин позицийĕ проблемăна çырса панипе тӳр килмест,<br>**е**<br>ача хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать. | 0 |
| ***II*** | ***Сочинение пуплев енчен йĕркелени*** | |
| **К5** | **Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни** | |
| | Ĕçре шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни палăрать: | 2 |





| | | |
|---|---|---|
| | – логика йăнăшĕсем çук; шухăшсене йĕркипе уçса пынă;<br>– текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | |
| | Ĕçре шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни палăрать,<br>**анчах**<br>логика йăнăшĕ 1 пур,<br>**тата /е**<br>абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни сисĕнет,<br>**анчах**<br>логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă,<br>**тата/е**<br>абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 0 |
| **К6** | **Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ*** | |
| | Ĕç пуплев тĕрĕслĕхĕпе тата уçăмлăхĕпе, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнипе палăрать.<br>*** Ку критерипе чи пысăк балл К10 критерипе чи пысăк балл илсен кăна лартса параççĕ.** | 2 |
| | Ĕç пуплев тĕрĕслĕхĕпе уçăмлăхĕ палăрать,<br>**анчах**<br>пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе усă курни сисĕнет,<br>**е**<br>ĕç тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнипе палăрать,<br>**анчах**<br>шухăша тĕрĕс те уçăмлăн уçса паман. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |
| ***III*** | ***Тĕрĕс çырма пĕлни*** | |
| **К7** | **Орфографи нормисене пăхăнни** | |
| | Орфографи йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур | 3 |
| | 1–2 йăнăш пур | 2 |
| | 3–4 йăнăш пур | 1 |
| | 5 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **К8** | **Пунктуаци нормисене пăхăнни** | |
| | Пунктуаци йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур | 3 |
| | 1–3 йăнăш пур | 2 |
| | 4-5 йăнăш пур | 1 |
| | 6 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **К9** | **Грамматика нормисене пăхăнни** | |
| | Грамматика йăнăшĕсем çук | 2 |
| | 1-2 йăнăш пур | 1 |
| | 3 е ытларах йăнăш пур | 0 |

| | | |
|---|---|---|
| **К10** | **Пуплев нормисене тытса пыни** | |
| | Пуплев йăнăшĕсем 1 йăнăшран ытла мар | 2 |
| | 2-3 йăнăш пур | 1 |
| | 4 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **К11** | **Этика нормисене тытса пыни** | |
| | Этика йăнăшĕсем çук | 1 |
| | 1 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **К12** | ***Факт тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырни*** | |
| | Факт йăнăшĕсем çук | 1 |
| | 1 е ытларах йăнăш пур | 0 |
| **Сочинени çырса пухнă пĕтĕм балл сумми (К1–К12критерисемпе)** | | **24** |

Тĕрĕс çырма пĕлнине хакланă (К7–К10) чухне **сочинени калăпăшне** шута илес пулать. Таблицăра кăтартнă нормăсемпе сочиненире усă курнă сăмахсен пĕтĕм йышĕ 150-300 пулсан хакламалла.

Сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-тен сахалтарах пулсан – ĕçе 0 балл лартса хаклаççĕ, ĕçе туман тесе шутлаççĕ.

Сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-150 пулсан К7-К10 критерисемпе балсене çакăн пек лартаççĕ:

**2 балл** лартма çак условисем кирлĕ:

К7 – орфографи йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур);

К8 – пунктуаци йăнăшĕсем çук (е 1 пĕчĕк йăнăш пур).

**1 балл** лартма çак условисем кирлĕ:

К7 – орфографи йăнăшĕсем 2-рен ытла мар;

К8 – пунктуаци йăнăшĕсем 1-3 пур;

К9 – грамматика йăнăшĕсем çук;

К10 – пуплев йăнăшĕ 1 пур.

Сочиненири сăмахсен пĕтĕм йышĕ 70-150 пулсан К7-К10 критерисемпе чи пысăк балл лартмаççĕ.

Ача хăй шухăшне палăртмасăр вуланă текста каласа панă е пĕтĕмпе çырса илнĕ кăна пулсан – ĕçе К1-К12 критерисемпе 0 балл лартса хаклаççĕ.

Вуланă текста каласа панă е пĕтĕмпе çырса илнĕ сочиненире ача хăй çырнă вырăнсем тĕл пулаççĕ пулсан – ача çырнă сăмахсене кăна шута илсе хаклаççĕ.

Вуланă текст çине таянмасăр çырнă сочинение хакламаççĕ.

Вăтам вĕренĕвĕн вĕренӳ программисемпе патшалăхăн пĕтĕмлетӳ аттестацине ирттермелли йĕркепе (Раççей Çутĕç министерстви тата Рособрнадзор 2018 çулхи чӳкĕн 07-мĕшĕнче кăларнă 190/1512 №-лĕ приказ) килĕшӳллĕн

«82.<…> кашни ĕçе пĕр-пĕринпе канашламасăр икĕ эксперт тĕрĕслет. Енчен те вĕсем лартнă балсем хушшинче пысăк пĕлтерĕшлĕ уйрăмлăхсем пулсан ĕçе виççĕмĕш эксперт тепĕр хут пăхса тухса хак парать. <…>

Виççĕмĕш эксперта предмет комиссийĕн председателĕ экзамен ĕçне маларах тĕрĕслемен экспертсенчен палăртать.

Виççĕмĕш эксперта экзамен ĕçне маларах тĕрĕсленĕ экспертсем лартнă балсемпе паллаштараççĕ».





Пысăк пĕлтерĕшлĕ уйрăмлăхсем тесе çаксене шутламалла:

1. 27-мĕш ĕçе тунăшăн (пур 12 позиципе) пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем 8 е ытларах балпа уйрăлса тăраççĕ. Кун пек чухне виççĕмĕш эксперт пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем тӳр килмен позицисемпе кăна хаклать.

2. К7 критерипе пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем 2 е ытларах балпа уйрăлса тăраççĕ. Кун пек чухне виççĕмĕш эксперт К7 позиципе кăна балл лартса парать.

3. К8 критерипе пĕрремĕшпе иккĕмĕш эксперт хаклавĕсем 2 е ытларах балпа уйрăлса тăраççĕ. Кун пек чухне виççĕмĕш эксперт К8 позиципе кăна балл лартса парать.